44-45

А. АФАНАСЬЕВ

# Телей уççи

— —

№ 3615

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
ШУПАШКАР—1944

Редактор Стихван Шавлы

НТ. 00064 Подп. к печ. 27-III-44г. Объем 1,75 п. л. Зак. 1533

Тираж 2000 Тип. № 1 Упр. полиграфпр. при СНК ЧАССР, г. Чебоксары

## ПĔРРЕМĔШ ЮРĂ

* * *

Çĕршыв! Çĕршыв! Йĕри-тавра
Тĕнче курнать пит аякка.
Кашлать кăлканлă аслă хирĕ—
Кунти çĕршывăн сар тумтирĕ.
Пĕр тăлăх çул кăна пĕччен
Таçтан, таçтан,—пит инçетрен
Тухса килет авкаланса,
Хăй пуçланни çинчен манса.
Çул хĕрринче пĕр тунката
Асилтерет тахçан авал
Асран çухалнă вăхăта...
Пытаннă пуль кунта, тен, ял
Ват йăмрасен сулхăнĕнче.
Таçти аваллăхри йăла,
Таçти аваллăхри тĕнче
Упранă пуль, тен, çав яла...
Чăвашăн хурлă юррисем
Куççуль тумлатнă пуль хирте.
(Анчах кив пурнăç йĕрĕсем
Таптанчĕç çĕнĕ ĕмĕрте!)
Чăвашăн савăнăçĕ—туй!
Унта хаваслăх, ташă, çуй...
Чăваш хавас, чĕнсен туя!
Кăпчанкă чăпăк, шур туя
Тытатчĕ пулĕ асатте,
Курса хĕр туйĕн хăватне,
Хурăнташсем те вĕрлесем,
Ялта хĕр туйĕ кĕрлесен,

Хӗрлӗ хӑмача тӑхӑнса
Ҫӳренӗ пулӗ савӑнса.
Ем-ешӗл тутӑр айӗнчен
Пӑхайнӑ пулӗ тахҫанччен
Ват йӑмрасем те туй ҫине,
Сирсе авӑллӑх хуйхине,
Хумханнӑ пулӗ ҫулҫӑпа
Шӗлтӗртетсе ҫупа-ҫупа.

* * *

Ҫӗрле уй-хир кӑкри ҫинче
Аташнӑ уйӑх ҫул шырать.
Кӑлканлӑ хир пуҫне чиксе,
Темрен пытаннӑ пек ҫыврать.
Вӑраннӑ ҫӑлтӑр шӑхӑрса,
Ҫап-ҫутӑ йӗрӗ хӑварса
Ҫӗр ҫинелле персе анать.
Нӳрелнӗ сывлӑш та канать.
Пӗр пысӑк ҫул таса хирпе
Ыталанса ҫыврать, хӗр пек.

Уй-хир касхи шӑп кӗвӗре...
Сывларӗ ыйӑх хир ҫинче
Темле ыр тӗлӗксем сӗнсе...
Пӑхаттирсен йӗнерӗсем,
Сӗм вӑрманти ҫын йӗрӗсем
Ҫинчен калаҫ пуль уй-хире,
Шуйттан патши хитре хӗре
Тамӑк ӑшне хупни ҫинчен...
Унта йӗрӳ те ахлату,
Унта сӳнет пур юрату,
Унта пуҫсем выртаҫ ҫынсен...

* * *

Тӗлӗксене салатӑр та,
Пӑхсамӑр: мӗн пур умӑрта?

Уй-хир, уй-хир, мĕскер илтен?
Таçта, таçга, пит инçетре
Мĕнле-ши пăнчă курăнать?
Пĕр хулăн сасă çуралать.
Етре пек вĕтĕ сас сапса
Тапăртатать пĕр урхамах,
Килсе çитет ак ман уммах!
Урса кайнах-шим ку лаши,
Урисемпе чавать çĕре,
Вĕçесшĕн пек таçти çĕре,
Çӳле сикет вăл ытлашши!
Аха!.. Йĕнер çинче этем...
Вылянчĕç хĕçĕн çуттисем.
Пуçра ун тимĕр шлепке,
Кăкри хупланнă тимĕрпе,
Ун çумĕнчех уххи, сăнни...
Ăçтан-ши ку? Маттур çынни?..
Ун умĕнче. кĕтмен çĕртен,
Вуникĕ пуçлă пĕр çĕлен
Çулă пӳлсе, кулса выртать,
Тискерленсе унтан ыйтать:
„Керим, Керим! Тинех, аха...
Тинех лекетĕн тамăка!
Кала мана, çĕр патшине:
Эс кам? Мĕнле усал шуйттан?
Каламасассăн чăннине,
Эс хăтăлаймăн çакăнтан!
Куратни эсĕ, ав, лере
Ман тĕттĕм, сивĕ тĕнчере,
Юнпа вĕреççĕ хурансем,
Шалçа çинче çын пуçĕсем?.."

Керим калать: „Хура Çĕлен,
Ан мухтансам вилепелен...
Пĕлес килет пулсан калам,
Итле, çапла калавăм ман:

Ку çĕршывран инçе-инçе,
Тусен хĕвеллĕ хӳттинче
Ларать, шап-шурăскер, хула
Халăхсемпе тула-тула...
Чиркӳ хĕресĕн тăррисем
Сыхлаççĕ унăн канăçне,
Килмеç-ши, теççĕ, тăшмансем
Сăнă йăтса хула çине.
Хула çине мăнаç кермен
Пăхать шĕвĕр тăррипеле.
Хура юн, эс, хура çĕлен,
Тивеймĕн ĕмĕр те пире!
Çав керменте пурнать маттур,
Хăй çĕршывне савать сатур.
Вăл эп—Керим йĕкĕт пулап,
Çĕре усалсенчен сыхлап.

Пурнатчĕ манăн ват аттем...
Иртейрĕç уйăхсем, çулсем
Çĕршыв тăрăх шăва-шăва,
Çĕн йĕр хăварчĕç çĕршыва.
Вилес чухне мана аттем
(Вăл манăн вилчĕ иртнĕ çул)
Каларĕ: „Ĕнтĕ сывă пул,
Кунçуллă пул, а эп сӳнем...

Сӳнетĕп эп! Çунсах сӳнем—
Этем вилмешкĕн çуралать.
Анчах та эс—Пулас этем,
Вĕçме тĕклетнĕ ик çунат.
Ӳлкев-мĕн çук сана манран.
Паян эп чĕрĕ, а ыран...
Манран пехиллĕх... Эс юлан
Çĕре тытма, телей тупма!
Анчах эс çамрăк-ха. Ăс пуç—
Вăл пурнăçри çут шурămпуç.

Ăс-пуç пухас пулать. Тĕнче
Ларать, ачам, ăс-пуç çинче“.
Çапла каларĕ вăл тата:
„Этем юнне, ĕçне хакла.
Чăн-чăн кирли вăл пурнăçра—
Асту, ачам, пулать пуçра.
Вилетĕп эп... Ах, юлашки
Сăмахăм çакă пулĕ-ши?..
Ак, ме, ачам, Телей уççи!—
Пул эсĕ ун маттур хуçи!“—

Çапла каларĕ те атте,
Эсрелĕ çитрĕ ун патне...
Атте мана тем уççине,
„Телей уççийĕ“ тенине,
Тыттарчĕ лăпкăн çеç, куçне
Ĕмĕрлĕхех хупас чухне...
Вăл вилчĕ те, анчах унне
Çӳле ăсатрĕç пуль чунне...
А эп... Эп вилĕп пиллĕхсĕр,
Çампа та йышăнмĕ теп çĕр
Ман айăплă хура ӳте...
Мĕншĕн тетни? Ак эс итле:

Атте вилсен, ту айĕнче,
(Вăл хуларан чылай инçе)
Эп куртăм пĕр вăрттăн путвал.
Паллах, вăл пулнă пуль авал.
Ун таврашне пăхсан, куратăн:
Лутра йывăç тĕмийĕсем,
Çын йĕрĕсем, таканлă аттăн
Чулпа хăйраннă кĕлисем.
Путвалăн алăкĕ çич хут—
Мĕнле çынна-ши пысăк суд
Хупайнă, тетĕп эп, кунта?
А эп—Керим! Мĕнле суда

Пăхатăп эпĕ?—тетĕп хам.—
Мĕн пур унта?—Уçса пăхам!
Чугунлă алăк çумĕнче
Çĕр пăтлă уçă—ах, тĕнче!
Мĕнпе уçас-ши? Ак аттен
Телей уççи уçайĕ тен!

Ăна эп уçрăм та, шалтан
Сăнчăр чăлтлатрĕ те малтан
Кăвак сухаллă ват старик
Килсе тухайрĕ ман умма.
Ӳт-тир çӳçенчĕ. Вăйлă шик
Сасартăк хупрĕ куçăма.
Куçа уçсан, пăхап çӳле:
Хăрушă çил ӳле-ӳле
Анайрĕ те старик умне,
Йăтса хăпартрĕ тӳпене.
Старик сас пачĕ тӳперен:
„Сыхлан ман алă лекесрен!
Темсем курас куну сан пур!
Эп—пусмăрсен патши—Хĕнхур!

Çапла эп тартрăм Хĕнхура.
Вăра ман пĕчĕк çĕршывра
Ăнмарĕ пурнăç. Выçлăх çул
Асап кăтартрĕ халăха.
Тăпра та çулçă, хытă чул
Этем кăшлатчĕ, выçлăха
Асапланса çĕнес тесе.
Асап шуратрĕ-çке тĕсе...

Пурнатчĕ ман аккам. Хитре.
Хĕвел вылятчĕ ун питре.
Аришчĕ ячĕ ун. Маттур.
Анчах ăна вăрларĕ мур.
Пĕрре çурт умĕнчи садран

Аккам çухалчĕ ăнсăртран.
Çынсем каларĕç: „Çил-тăвăл
Айне пулман-ши, мĕскĕн, вăл?“
Хула çине пĕрре чăнах
Килсе, тет, тухнă тăвăлах.
Анчах эп çукчĕ-çке килте...
Çилсем иртсен, таçта çўлте
Ариш сасси те пулчĕ, тет...
Нумай каларăм-çке, çитет!
Халь эп мĕнпур çут тĕнчери
Телейшĕн çуннă чĕресем
Мĕн ыйтнине, мĕн кĕтнине,
Пике хĕре—чĕре вутне
Тупма каятăп!»
                    Хай çĕлен
Керим çапла тенипелен
Пĕрре лăхлатрĕ те кулса,
Хайхи Хĕнхур патша пулса
Çывхарчĕ, вилĕм пек, тискер,
Шуйттанпала тăванлăскер.
Хăрлатрĕ вăл: „Аха... Эс-им?!
Чĕтретĕн-и, вăйсăр Керим?“
  Керим вăранчĕ айхăран...
Шупкалчĕ уйăх тўпере.
Саланчĕ çăлтăрсен вăййи.
Каяс çулсен умне уçса,
Тĕтрелле сĕмлĕх сирĕлет.
Кăлкан хумханчĕ вăранса...
Тўпе хăмач пек хĕрелет...

## ИККĔМĔШ ЮРĂ

Пĕр юланут мăн çулпала
Хыт кустарать. Вăл кам? Палла!
Керим! Керим!.. Чăнах та çав.
(Çапла пуçлантăр-ха калав).

Керим юрлать хӑй пынӑ май:
„Ҫулсем пит вӑрӑм-ҫке, ай-хай!..
Саркун, Саркун ҫӗршывӗнче
Выртать канса хӗвел хӗрӗ.
Ун сӑнӗнче кулса вылять
Хӗвел ҫинчи хитре тӗрӗ.
Ели иккен ун чаплӑ ят.
Ӑна качча илесчӗ ман.
Унпа куна тӑсасчӗ ман!“

Пырать-пырать маттур Керим,
Ун шухӑш пысӑк ҫавтери.
Лаша утти, лаша ҫилхи—
Ҫунан кӑварӑн вут чӗлхи.

Мӗскер-ха вӑл инҫе-инҫе,
Ҫеҫен уй-хирӗн хӗрринче
Кӑварланса ҫунать! Анчах
Кӑвак тӗтӗмӗ ҫук пачах...
Керим тӑрать ак тӗлӗнсе.
Шӑпах та шай ун тӗлӗнче
Кӑвар ҫунса кӗлленӗ тен!
Мӗскер! Хастарлӑ ҫын—Керим
Кӑварсенчен ҫеҫ хӑрӗ-им?
Утне хистерӗ те пӗрре,
Тӑр-тӑр чӗтретрӗ вӑл ҫӗре.
Эх, вӗҫрӗ вӑл сиккипелен
Тӗмескесем, варсем ҫинчен.

Анчах та вӑл кӑвар та мар,
Чим-чим, тинкеререх пӑхар:
Хӗвел ҫинче ҫуна-ҫуна
Ахах вӑрман кашлать ӑна.
Ахах вӑрман, ахах вӑрман!
Ӑна хальччен этем курман.
Вӑрманӑн тикӗс хӗррипе

Кăнтăр лĕп çилĕ вĕрнине
Çап-çутă тенкĕ—çулçине
Вăрман тăкать те çул çине
Ахах пирне сарать çĕре,
Те илĕртесшĕн юмахри
Çич тинĕс хĕрринчи хĕре?..
Анчах мĕнле вăрман варри!
Шалтан-шала, вăрман ăшне,
Ун акăш-макăш чăтлăхне
Сукмак илсе кĕрет хуллен.
Хуть ир, хуть каç—кунта куллен
Чĕрченкĕ кайăксен юрри.
Кунта пусмасть пĕлĕт ури—
Куçса çӳрен хура мĕлке.
Кунта хуткупăс—йĕс чĕлхе
Хăй тĕллĕнех вĕçсе вылять,
Кунта араб юмахĕсем,
Чи хаклисем, илемлисем
Юрăсемпе пĕрле вĕçеççĕ.
Юмах—аваллăх кучченеçĕ
Такмакланать кунта хăех.
Кунта юмахçă пĕр хĕр çех—
Пур тĕнчине хăть шырасан та
Ун пеккине тупма пулмасть.
Илемлĕ хĕрĕ—Шехеразада
Юмах калать пин те пĕр каç.
Çунат çупса та, шăхăрса та
Пин-пин саркайăксем юрлаç.
Кунта черкке пек чечексем
Илем кӳрсе ӳссе лараç,
Ачаш кăна çилсем килсен
Çил майăн лăпкăн пуç таяç.

Ăçта Керим? Вăл, ав, пырать,
Куçĕсемпе теме шырать.
Сукмакпала шала кĕрет.

Шалта çут кӳлӗ хӑй çине
Тӗлӗнмелле çӗршыв сӑнне
Çут тӗкӗр майлӑ ӳкерет.
Ун умӗнче шап-шур кермен.
Кермен тӑрри—мерчен хӗрес.
Керим чарнать ак тӗлӗнсе.
Инçе те мар, ун умӗнче,
Ларать кермен, шап-шурӑскер,
Патша керменӗнчен чипер.
Йӗри-тавра ахах карта,
Унта ларать çӑвар карса
Çӗр ӑмӑрткайӑк. Пӗр хӑлаç
Мӗлкисене çӗре сараç.
Кӳлли енне тухма хапха,
Хапхи те хаклӑ пуль хакпа,
Эреш-мерешлӗ чӗнтӗрпе,—
Ун пек хапха çук Чӗмпӗрте.
Ун ик енче ик арӑслан.
Керим тӑмарӗ шутласа,
Хастар хистерӗ те, лаша
Тапса çеç сикрӗ ухӑ пек,
Вӑл кӗчӗ хапхаран çил пек.
Ик тискер кайӑк, Кериме
Ӗлкӗрейменӗç вӗлерме.
Керим йӗнер çинчен анса,
Шикленнӗ хыççӑн кӑшт канса
Тӑрать ак алӑк умӗнче.
Алакӗсем йӑлт кӗленче!
Керим шап-шур пусма çинчен
Шӑкӑрт-шӑкӑрт пусса иртсен,
Пӗр çитмӗл çичӗ алӑк хирӑс
Чӑри-чари уçӑлса карӗç.
Ах, турӑ! Çурчӗ ӑшӗнче
Татах та кӑмӑл ӑшӑнчӗ.
Пӗр хӗрӗх кантӑкран кӗрсе
Хӗвел ури вылять çӗрте.

Урайĕ ун—алмаз. Маччи...
(Шалтах хытайрĕ ку ачи!)
Маччи ун кĕмĕл. Шур стена
Йăтса ларать çав маччана.
Çăлтăр пек çут çуртасене
Çакса çутатнă пўлĕме.
Керимăн умĕнче яри
Хускалчĕ алăк. Хĕр ури
Çўхе чаршавĕ витĕрех
Курнать ачашшăн та хитрен.

— Салам алликĕм, сара хĕр!—
Тесе пуç тайрĕ те Керим,
— Иртсем, ыр çыннăм!—терĕ хĕр,—
Арăслансем тивмерĕç-им?..

Курман-илтмен çынпа ăçтан
Хăйса калаçтăр хĕр? Элле
Ку çын çĕршывĕ Аçтăрхан...
Ăна ăçтан-ха пĕлмелле?
Анчах хĕр кăмăлĕ çемçе.
Татса илсен пĕр çимĕçе
Икке пайлассăн туйăнать,
Турра шĕкĕр-ха. Ĕç ăнать...
Керим хĕре ытараймасть,
Чĕркуçланмасăр чăтаймасть,
Хуллен кăна пуçне пĕкет,
Татах тем каласса кĕтет.
Çапах пике сас кăлармарĕ,
Хăй шăллĕне вăл паллаймарĕ.
Самант:—Керим, шăллăм, тесе,
Сас пачĕ вăл хĕпĕртесе.
Вăл ыталарĕ тăванне,
Юхтарчĕ ăшă куççульне.

Çапла тӗлпулчӗç ик тӑван...
Анчах пӗр-икӗ минутран
Вӑрман кашларӗ те, пӳрте
Кӗрсе те тӑчӗ пӗр этем.
Çапла пуçларӗ сӑмахне:
— Ай-хай, кунта этем шӑрши.
Ыр кӑмӑлпа вӑл килнӗ-ши?
Ыр кӑмӑлпа пулсан — ыталӑп,
Усал пулсан — хыпса çӑтатӑп.
Ариш калать упӑшкине:
— Куратӑн эсӗ кӗрӳшне.
Хӑна тӑвар та... вӑл васкать,
Инçе çула тухса каять.

* *
*

Янрарӗç музӑксем хитрен.
Элем-селем шур чул кермен
Мӑнкӑмӑлпа кӗрлерӗ те,
Тӗкӗр пек кӳлӗ хӑй çине
Ирхи сӑна ӳкерчӗ те,
Керим çӗклерӗ черккине,
Керим çаптарчӗ сӑмахне:
— Çак çут патшан ыркӑмӑлне
Çӗклетӗп эпӗ черккӗре —
Тавсси мӗнпур кӗрекӗре!
Кунта эп пултӑм-çке хӑна —
Акка, ырсунтӑн эс мана.
Ӑмӑрткайӑк патши — йысна,
Эп туйрӑм, куртӑм сан чысна.
Тӗнче—этемшӗн ыр тивлет:
Хӑшне вӑл вилӗм е суран,
Е пысӑк хурлӑхсем пиллет,
Е ырлӑхсем шӑп мӑй таран!
Сайлантӑм эп шӑп ик эрне.
Ман ӗнтӗ халь тӗнче хӗрне

Кайма та вӑхӑт пуль — каям.
Итле, йыснаҫӑм, эп калам:
Эс ик ҫул ҫура ҫӳресе
Саркун ҫӗршывӗнчи хӗре
Ҫук, вӑрлаймарӑн ху валли —
Ятне пӗлетӗн пуль: Ели...
Пӗр кун иртет — кӗтни патне
Эпир тӑватпӑр пӗр утас.
Ҫап-ҫамрӑк ӗмӗр хӑватне
Мӗнле пӗччен сая ярас?
Илетӗп эп ӑна качча!
Пӗлместӗп эп, тен, тип шалҫа
Тӑрне те тирӗҫ пуҫӑма,
Анчах эп хатӗр ҫапӑҫма! —

Черкке тӗпне Керим пушатрӗ,
Йӗнерлесе утне тӑратрӗ...
Пилӗкӗнчи пиҫиххине,
Хӑй ҫуралсанах ҫыхнине,
Кашта ҫиве ҫакса хӑварчӗ,
Пуҫне тайса сӑмах ҫаптарчӗ:
— Вилес пулсан: тӑхам виҫ кун
Ҫӗре тумлатӗ хӗрлӗ юн.
Акка, йысна, мана ан манӑр...
Вара ман йӗр тӑрӑх тапранӑр,
Сывпул, йысна! Акка, сыв пул!
Ан макӑр эс, куҫҫульсӗр юл.

Мерчен куҫҫуль куҫсем ҫине
Тӗтре ан картӑр нихӑҫан.
Чӗрем! Телей чӳречине
Эпир тупатпӑр шырасан.
Атя, хӑватлӑ урхамахӑм,
Ман ӗмӗтсен ҫулне йӗрле,
Эп ӗмӗте инҫе пӑрахрӑм,
Анчах унта ман ҫитмелле! —

## ВИÇÇĔМĔШ ЮРĂ

Ларать шап-шурă çурт хирте
(Ун пек хирсем сайра пирте).
Ӳсеççĕ çӳллĕ йывăçсем
Пӳрт умĕнче ретпе ларса.
Чĕвĕлтетеç саркайăксем
Çанталăка илем парса.
Пӳрте яр уçă кантăкран
Садсен шăрши кĕрет ялан.
Хитре садсенĕн хушшипе
Чипер шур акăш уттипе
Çӳрет матгур хĕр — хура куç.
Хĕвел, телей те шурăмпуç
Çуралнă тейĕн ун валли.
Саркун патши-çке ку — Ели.
Кунта выртаç сап сар сăртсем,
Çамкисене хĕвел хĕртсе
Çилпе ярать тура-тура.
Хир качаки — тăват ура
Тăрăс-тăрăс сиксе çӳрет,
Хирти шăрчăк сӳре сӳрет.
Тӳпен йăваш ытамĕнче
Канса пурнать кунти тĕнче.
Сăрт çумĕпе иртет сукмак,
Унта çын йĕрĕ те çук няк,
Анчах ку мĕн-ха?! Мĕн ури
Хире хускатнă çав тери?
Хуран пек шăтăксем алтса
Кунтан халь иртнĕ пуль лаша.

Керим анать йĕнер çинчен.
Пӳрте пăхать чӳречинчен:
Ура чĕрни çинче утса
Керим кĕрет пӳрте. Курать:
Çемçе тӳшек ăшне путса

Шур акăш пек пике çыврать.
Шур кăпăк пек минтерĕсем,
Эрешлĕ тĕрĕ — хĕррисем.

Мерчен куç — çĕрĕ пӳрнинче,
Питрен пăхсан — куç йăмăхать.
Тĕлĕнмелле иккен тĕнче —
Мĕнле хитре сăн çуратать!

Çыврать маттур хĕр... Чĕрере
Кам, кам упрамĕ вăл хĕре?
Ун пек хитре сăна хальччен
Тупайман эс халлапсенче.

Йăвашшăн хупнă вăл куçне,
Çӳçпе витсе хулĕсене.
Ачаш кăкри сывлать хуллен,
Нар пек чĕри тапать çемçен.

Маччаранах çӳхе чаршав,
Кунта кĕмест сас-чĕвĕ, шав.
Илемлĕ пӳлĕм шăп кăна,
Хĕр умĕнче тăрать хăна...

Пикен илемлĕ аллине
Керим çыхса хурать, унтан
Ярса илет саламатне,
Çапма тăрать вăл вăйпалан.

Пике татмасть-ха ăйхине,
Анчах Керим ман хайхине
Çапать пĕрре шăп кăкăртан.
Чим, чим, Керим, мĕн хăтланан!?
Вăраннă хĕр тăрать сиксе,
Калать куççулĕпе йĕрсе:
„Ан хĕнесем. Кĕçĕн пулсан,

Сана эп шăллăм тейĕттĕм.
Хампа пĕр тантăшах пулсан,
Сана эп мăшăр тейĕттĕм..."
Çĕре ÿкет хыт саламат.
Керим юпа пек кăн хытать.

Пăхса тăрать хĕр умĕнче
Вăтаннă пек пуçне чиксе.
Анчах та ку мĕскер, мĕскер,
Ытла хăрушă та тискер?
Ун умĕнче — сакайĕнче,
Юнпа варланнă пир çинче
Тем айăп тупнă йĕкĕтсен
Выртаç хевтесĕр пуçĕсем.
Тăхăрвун тăхăр пуç унта.
Хăçан, тата мĕнле суда
Кĕрейнĕ турă çыннисем?
Ăçта выртаç-ши уххисем
Кунти маттур салтакĕсен?..
— Эй, урхамахăм, ан кĕçен!
Керим халех тухать.—Хĕре
Йăтса тăратрĕ вăл çĕре...

* * *

Ели калать: „Вăрçă çынни!
Эс пултăн пулĕ тур çырни.
Тăхăрвун тăхăр çын ури
Çул хыврĕ ман пата юри
Мана качча илесшĕн çеç.
Кур, вăл пуçсем выртаççĕ веç!
Эс — кĕрешме çуралнă çын.
Сана саватăп эп, Керим!
„Сад пахчинче, ай, улма.
Атя, савни, пайлама.
Çурри сана, çурри мана —
Чунăм савни, сав мана!"

Керим чуптурĕ сар хĕре,
Çапла пĕрлешрĕç ик чĕре.

Пĕр ут çине утланчĕç иккĕн,
Вĕсем кустарчĕç хыттăн, хыттăн.
Лаши вĕçет пуçне ухса...
Керим çине пуçне хурса
Ели канать, Ели çыврать,
Темтепĕр тĕлĕксем курать..
Сасартăк кай енчен пĕр сас
Килсе те çитрĕ. Мĕн тăвас?
„Тăхта! Тăхта!“ — тесе такам
Пĕр кăшкăрать. Чугун такан
Çĕре тапни те илтĕнет.
Вăл камăн учĕ пĕрхĕнет?
Вăл кам çапла хыт кăшкăрать?!
Ели вăранчĕ. Вăл курать:
Хирсем, варсем, сĕм вăрмансем,
Ахах пек çутă шыв-шурсем...
Керим çилленчĕ, аттипе
Утне каллех хистерĕ те
Тапса çеç сикрĕ вичкĕн ут,
Çилхи çĕкленчĕ тепĕр хут.
Ăçти çăва шăтăкĕнчен
Килсе вăл тухрĕ пĕр пĕччен.
Элле этем, элле шуйтан!
Тарсан та хăтăлмăн унтан!
„Тăхта!“ тесе хăй кăшкăрать,
Пуç тăрринче хĕç вылятать.
„Усал Хĕнхур...“ — тесе кăна
Керим каларĕ те, ăна
Хуса та çитрĕ хай Хĕнхур:
„Ну, хĕç айне пуçна эс хур!..“ —
Тесе вăл сулчĕ те хĕçне,
Керим йăванчĕ çĕр çине...

Ели — ҫӑханӑн аллинче.
Ӑна хайпе пӗрле илсе
Хӗнхур вӗҫтерчӗ каялла,
Элле хире, элле яла...
Ӑна курмарӗҫ ман куҫсем,
Ҫапла иртейрӗҫ ку ӗҫсем...
Ели юхтарнӑ куҫҫуле
Ҫилсем шӑлайрӗҫ пит ҫинчен.
Керим — пӗр ҫылӑхсӑр виле
Хире юлайрӗ пӗр пӗччен...

Тинкererех итлер, пӑхар:
Мӗнле сассем? Мӗнле ҫӑвар?
Пӗр ӑмӑрткайӑк тӳпере,
Пахать таҫти-таҫти ҫӗре.
Сисет пуль юнӑн шӑршине,
Ҫунаттипе уй-хир ҫине
„Сыв пул" — тесе сула-сула
Вӗҫсе вӑл кайрӗ каялла...
Керим выртать ҫул хӗрринче,
Юнпа хӗрелнӗ чул ҫинче.
Лаши пӑхса тӑрать ӑна,
Кӗмест-ши, тет пулас, тӑна.
Шуса иртеҫ шур пӗлӗтсем.
Пирӗштисен ҫуначӗсем
Унта курнаҫҫӗ шуралса,
Часах каяҫҫӗ ҫухалса...
Керим ҫыврать... Ун тӑлӑх пуҫ
Кӗтет пулас ҫут шурӑмпуҫ,
Пӑхса выртать тӳпе ҫине...
Ҫак самантра хӗвел питне
Хупларӗ ӑмӑрткайӑкӗ,
Вӗҫсе те анчӗ ҫӗр ҫине.

* * *

Керим ҫĕклерĕ те пуҫне,
Вăрах, тет, ҫывăрнă хăйне.
— Эс йăнăшатăн ҫав, Керим,
Хăвна эс каннă терĕн-им?
Сана вĕлернĕччĕ такам.
Вара сана шырарăм хам.
Чĕрĕ Шывпа сĕрсе кăна
Каллех ҫын турăм эп сана, —
Ҫапла калать йысни ăна.
Юнпа хĕрелнĕ чул ҫинчен
Тĕреклĕн, хăвăрт ҫĕкленсен
Пурне те пĕлчĕ яш Керим.
Асне илейчĕ вăл Ели
Пуҫне хурса ҫывăрнине,
Усал Хĕнхур ҫывхарнине...
„Йысна, эс вагă. Эс пĕлен,
Юратура пулать ҫĕлен,
Юратура пулать кăвар,
А хĕр тени ялан тавар,
Вăйли вăрлать вăйсăрринчен.
Курманччĕ эпĕ ҫĕр ҫинче
Ели пек ырă хĕрсене...
Ман пуҫ йăванчĕ ҫĕр ҫине,
Каятăп пурпĕр эп тепре —
Вăрлатăпах патша-хĕре!
Шик ҫук ман халь. Хура элчель
Хĕҫне ҫĕклетĕр — эп вилем...
Кĕрешӳпе пĕрле — хĕвел,
Кĕрешӳпе пĕрле — илем!
Паллах, мана тепре чĕртеймĕ
Ни чĕрĕ шыв, ни эс, йысна.
Пуҫ хунисемшĕн эп ҫĕкленĕп,
Вĕсем чĕнеҫҫĕ тавăрма.
Кĕрешӳре пуҫа хурам!

Хама чикме ыйтмастăп храм.
Фараонсен масарĕсем
Таса хиртен начар вĕсем!
Тӳшек çинче вилес те мар...
Ман юн вĕри, сикет тымар!
Ийсна, эс таврăн халь киле,
Текех пулмастăп эп виле.
Акка ан хуйхăртăр, — кала,
Керим килет, те, туйпала!
Сыв пул, йысна! Лаша чĕнет,
Епле вăл хытă кĕçенет!
Кĕçен, лашам! Атя, каяр...
Тăшман — вăйли, эпир — хаяр".

* * *

Ăçта-ши пирĕн чĕресен
Юратупа çунан пăнчи?
Эй, Емĕр, эс юратнисен
Чĕрисене халех ан çи!
Сывах-ши-ха садсен хӳтти,
Хитре сукмак, Ели утти?..

Пĕр тăлăх хирĕн варринче,
Ем-ешĕл садăн айĕнче,
Çаплах ларать-ха шурă çурт.
Эпир кунта ак тепĕр хут!
Чӳречесем те яр уçах.
Тахçан пĕрре унта хусах
Вĕрин чуптунă Елие...

Садра пиçет хитре чие...
Тин тухнă уйăхĕ тата
Илем кӳрет кунти сада.
Шăпчăк, сасне чара-чара,
Юрла пуçларĕ пахчара.
Пахча тавра шур чул карта.

Хăйсен айне мĕлке сарса
Лараççĕ урттăш йăвăççем.
Анчах çак хушăра таçтан
Утпа ак çитрĕ пĕр этем.
Йĕнер çинчен сиксе ансан,
Пахча картин юпи çумне
Кайса кăкарчĕ вăл утне.
Пытанчĕ тăпчăк. Урттăшсем:
„Чим, чимĕр, терĕç, тантăшсем,
Ку çын паллана çын мар-и?“

Çут кантăк уçăлчĕ яри.
Вăл çын тăнларĕ, ку пӳртре
Пулса курман çын пек чеен,
Е ак халь-халь усал етре
Пырса тивес пек чĕринчен.
Итлерĕ вăл, стена çумне
Хурса, шикленнĕ пек, пуçне.
Пӳртре такам сывлать пĕччен.
Яш çын пĕччен сасса илтсен,
Сиксе кĕрет чӳречерен...
Ăйхи саланчĕ пĕр чĕрен.
„Ели, эс-и ку? Эп — Керим!“
„Керим!.. Ăçтан эс?.. Кил часрах!“ —
Чĕри çемçелчĕ те хĕрин
Пĕрремĕш тутлă ытамрах...
Садра, улмалăх айĕнче,
Лараççĕ иккĕн, калаçаç,
Шăпланнă çĕр кăкри çинче
Сывлăм сапса выртать лĕп каç...

Ели калать: „Хĕнхур патшан
Лаши пит вăйлă, — эсĕ шан.
А сан лашу — начар йăхран“.
Керим калать: „Ăçтан, Ели,
Тупас ман вăйлă урхамах?

Каллех усал Хӗнхур вили
Пулас килмест — памастӑп мах!"
Ели калать: „Хӗнхур патши
Ҫӳрет ҫын юнӗ шыраса...
Мана ямасть вӑл ҫак пӳртрен.
Ун хӑйӗн арӑмӗ, пӗлен,
Пӗрре ҫеç мар — нумай, нумай.
Мана та арӑмӗ тума-и
Илсе каясшӑн вӑл. Ӑна,
Паллах, каламӗ вӑл мана.
Керим, эпир пӗрле тарсан
Телей тупаймӑпӑр, усал
Хӗнхур ҫитейӗ пур тӗле
Хуть кӑнтӑрла, хуть сӗм ҫӗрле...
Анчах ан парӑн чӗрӗлле!
Малтан эс туп лаша. Ытти
Нимех те мар. Ҫут тӗнчере,
Ҫынсем ҫитсе ӳкмен ҫӗрте,
Пур вутлӑ тинӗсӗн утти,
Унта пурнать, тет, авалтан
Тухатмӑш карчӑк. Ҫавӑнтан
Хӗнхур вӑрланӑ лашине.
Анчах лашин пӗр урине
Ҫав карчӑк, вутлӑ тинӗсри,
Ҫӑлса юлайнӑ-мӗн юри...
Керим, кай эс те ҫавӑнта,
Лаша илсе кил эс унтан..."
Сӗм ҫӗрлеччен ҫак икӗ чун
Калаҫрӗҫ лӑпкӑн тем ҫинчен.
Ҫӑлтӑр хӳри — шӗвелнӗ юн
Ҫӗре тумларӗ тӳперен.

Шурӑмпуҫпе шуралчӗ ҫӗр.
Хӑй савнине ӑсатрӗ хӗр,
Ӑсатрӗ хӗр хӑй савнине...
Курса ҫеç юлтӑм ун лаши

Тапса сиксе çĕр чавнине.
Керим ăçта çул тытрĕ-ши?

## ТĂВАТТĂМĔШ ЮРĂ

Хумсем сикеççĕ çырана,
Каясшăн темĕн шырама...
Кунта пытаннă пĕр утрав.
Çитмест кунта вăрçи, йыхрав...
Килмен, тет, çакă тинĕсе
Орфей карапĕ те ишсе...
Хӳреллĕ çăлтăр та каçпа
Хăрать унтан вĕçсе каçма.
Таварĕпе пуян купса
Кунта çитмен иккен нихçан.
Шуйттансене вилме сунса,
Чиркӳ кунта çапман, тет, чан...
Ку тинĕсре тулли шуйттан!
Хăшпĕр чухне тăсать шывран
Аллисене шуйттан çури —
Пĕччен утравăн тĕп чури.
Хăшин алли, хăшин ури
Тинĕс çине тухса тулать,
Шуйттанлă тинĕсĕ кулать.
Утрав та тинĕс — пĕр канаш.
Пĕр-пĕринпе ялан йăваш
Вĕсем пурнаççĕ, асанне
Юратнă пек асаттене...
Никам утравăн канăçне
Пусмăрлама килме хăйман.

Тăхта! Тăхта! Мĕнле такан
Тапса чĕтретрĕ çырана?!
Çĕр чĕтретме юратакан
Ăçтан килет? Мĕн шырама?
Вăл кам? Палларăр-и эсир?

Элле ласкарĕ-и пĕр чир
Çак утрава çилленнĕрен?

* * *

Керим тавра пĕр ылттăн хурт
Вĕçсе çӳрерĕ те виç хут,
Çапла каларĕ: „Ыра пул...
Кăçал ăнмарĕ тырăпул...
Хуртсен патши эп... Халăха
Выç çул хăварчĕ хурлăха.
Парсам мана пĕр çăкăрна,
Тен эс те пулăн ман хăна,
„Ăçта-ши хурт?“ — тесе кала
Тивсен сана хĕн япала“.
Керим пĕр çăкăр ырăнне
Парса ярать шăп виççĕшне.
Керим калать.. „Тăван, сывпул!
Телейлĕ çул, телейлĕ çул...“
Керим утса пырать çуран,
Утне вăл ячĕ ирĕке:
Çак тинĕсрен вĕçсе каçсан
Вăл вилчĕ мурăн чирĕпе.
Хуйха ӳксе, аран-аран
Керим хăпарчĕ сăртпалан.
Ак курăнчĕ пĕр айлăмри
Кивелнĕ улăм — пӳрт тăрри.
Вăл ак çĕкленчĕ ту çинех.
Çунса хуралнă, пĕчĕк çех,
Кушак кĕмелĕх чӳрече
Касса хăварнă пĕр енче.
Пăхса ларать пуль, тен, унтан
Шăп сакăр куçлă пĕр шуйттан,
Тен, майракаллă сăттана
Тытса çист пуль-ха шăна.
Ак пӳрт те лайăх курăнать,
Вăл чăх ури çинче ларать.

Керим васкарӗ пӳрт умне.
Шик пӑчӑртарӗ ун чунне.
— Эй-эй! Хуҫи килте пур-и? —
Керим шаккать. — Кам пур килге? —
Анчах туратлӑ чӑх ури
Вӑр вар ҫеç ҫавӑрчӗ пӳрте.
Тӑраç юман турачӗсем
Пӳрт тӑрринче чармакланса.
Темрен шикленнӗ мӗлкесем
Ҫӗре выртаç тармакланса.
Пӳрт ҫамкинче пӗр тӑмана
Ларать, усал тӗлӗк курать.
Курмасть ҫӗрти ҫӗн хӑнана,
Ҫӑварӗнчен тӑхлан сурать...
Пӗр хӗсӗк алӑкран сиксе
Керим кӗрет пӳрте шӑк-шак.
Шур кӑмака ҫинче сӗнксе
Ларать шӑртланнӑ пӗр кушак,
Ун умӗнче ват карчӑк пур,
Хӑрлаттарсах ҫыврать... Ах, тур!
Ҫӳҫне-пуҫне кушак турать.
Хай карчӑк яш! сиксе тӑрать....
— Салам-аликкӗм, кинемей!—
Тесе калать Керим ӑна.
— Тавах сӑмахшӑн... Хӗнеме
Сиксе тӑрсаттӑм эп сана..
Тав ыр суннишӗн. Тӗпеле
Иртсем. Кала, мӗн хӗнпеле
Утса ҫӳретӗн ҫӗр ҫинче?
Пӗлетӗп, ҫӗршыву инҫе,—
Лӑхлатрӗ карчӑк лӑх та лах.
Вара пуҫларӗ вӑл юмах:
„Эс килнӗ пуль лаша илме?
Пуласси не малтан пӗлме
Мана кушакӑм пулӑшать.
Лаша патне эппин... Юрать,

Анчах малтан паратăп ĕç.
Тăваймасан ăна эс, хĕç
Касса пăрахĕ сан пуçна,
Çăхан шăтарĕ сан куçна.
Çунатлă ут вуниккĕ пур,
Вуниккĕш те—кĕмĕл çилхе.
Пурте пĕрпек, пурте маттур,
Хӳри-çилхи вылять çилпе...
Пĕр кун кĕтсе пăх вĕсене,
А çухатсан пĕр лашине,
Шалçа тăрне пуçна тирсе
Кайса лартап çара хире!“

* * *

Хирте çӳрет вуник кĕсре.
Керим çыврать... Кĕтмен çĕртен
Вуниккĕшĕ вуник çĕре
Тарса çухалчĕç кĕсресем.
Керим вăранчĕ айхăран.
Пĕр ним те çук таса хирте...
Шур пĕлĕтсем çеç аякран
Таçта каяç ирте-ирте.
Керим хурланчĕ. Çук утсем!
Хĕвел анать... уй-хир çара...
Тӳпе çинче те çутăсем
Чĕтре пуçларĕç аякра...
Керим килменнине кура
Тухатмăш карчăк савăнать.
Уралла пӳрчĕ хăй тавра
Пăлтăр та палтăр çаврăнать.
Шупкалнă уйăх тӳперен
Анăçалла хуллен анать.
Ват карчăк тĕттĕм кĕтесре
Этем çиесшĕн савăнать.

„Ăçта-ши хурт?!“
Çак самантра
Хуртсем вĕçеç Керим тавра:
„Мĕнле нуша усать пуçа,
Пире сăйланă ыр хуçа?“—
Çапла çех ыйтрĕç шав туса.
Пĕр-ик минут-мĕн иртиччен
Мĕнпур çăва шăтăкĕнчен
Тарса çухалнă утсене
Тупса кăларчĕç хир çине.
Керим çĕртен пуçне çĕклерĕ,
Паçрах вăраннă ешĕл хир.
Хире илемлĕн çеçкелерĕ
Хĕвелĕн ывăлĕ—çут ир.
Пӳртре ват карчăк ятлаçать:
„Ухмах хĕрсем! Эп пурсăра
Пĕр-иккĕ çупăп ак çăт-çат,
Пытараймастăр хăвăра...“
„Аван пытаннăччĕ, анне!—
Вуник кĕр харăс такмаклаç,—
Хуртсем вăл ячĕ хир çине
Пире тупмашкăн иртнĕ каç...“
Каллех шăп пулчĕç. Турчăка
Ӳтсем çинче лăчлатрĕ те...
(Ан шарлăрах пура-çука,
Тӳпелĕ карчăк сире те!)

Каларĕ карчăк: „Çук, этем,
Мана каларĕç лашасем
Сана хуртсем пулăшнине.
Хуртсем ан яр ман ĕшнене!
Чее эс пит! Ну, кĕт тепре!
Утсем ман пурте хисепре—
Вуникĕ ут. Кĕтсе килсен
Хăшне саван, çавна илен.“
Керим чĕнмерĕ пĕр сăмах.

Вуник çунатлă урхамах
Пĕр-пĕринчен ирте-ирте
Каллех вылярĕç уй-хирте...
Керим, пит хытă вырçăран
(Апат çимен вăл вăрахран)
Тухатнă йăйăх кукăльне
Çĕре ларса кăшт çирĕ те
Лап ӳкрĕ, ӳсĕр пек, çĕре.
Вуникĕ ут чăл-пар хире
Тарса çухалчĕç. Пĕр этем
Куçне те курăнмĕç вĕсем!

Анчах мĕскер илтет уй-хир?!
Вăл кам юрлать çапла хитре?
Йăхусене, Керим, эс сир,
Курсам асаплă пĕр хĕре:
Хирти шур чул çине ларса
Юрлать хĕр... уснă урине...
Илтесчĕ хамăн ыр сунса
Вăл хурланса юрланине.
Çапла юрланă вăл йĕрсе:
„Ман чĕрене кăвар чĕртсе,
Мана туймарăн эс, сисмерĕн...
Эс, юрату, манран писмерĕн...
Керим, ăçта эс? Ма сисместĕн?
Кама калас юратăва?.."

Кун пек чухне çырмашкăн хĕн
Чĕре паичи юрра-сăвва.
Çын маннă-çке ку утрава!
Кунта пусман çын урапа.
Кунта мĕнпур илем—пиçен.
Хуть кайнă çын, хуть килекен
Кунта курмасть шур хурăна—
Элле çĕр çăтнă-ши ăна?!
Ялан çĕлен пулса çĕрле

Çут çăлтăрсем ӳкеç çĕре.
Пур пĕлĕтсем кунта пăсланкă.
Пĕр кайăк çеç вĕçет—шаланкă,
Çĕр, хĕвелпе çунса типсен,
Çăмăрсене ыйтать çӳлтен.
Çынсемшĕн тĕлсĕр утравра
Пурах иккен хитре кĕтес!
Армутисем пĕр лапамра
Пуканесен туйне кĕтеç.
Манман иккен пĕччен ачалăх
Пуканесен вăййисене!..

Тавралăхĕ сас-чӳсĕр. Шăплăх.
Хĕвел анас тет шыв çине.
Эп куртăм çакă вăхăтра
Шур чул çинчи хĕре умра.
Пуканесем патне пырса
Чылай вăл ларчĕ выляса.
Хăй пĕчченнишĕн вăл кулянчĕ...

Армутипе лĕп çил вылятчĕ,
Хĕвел те аннăччĕ. Керим
Çаплах çыврать, сисмест те-шим?
Ӳн умнелле маттур çеç хĕр
Килсе те тăчĕ сас-чӳсĕр.
Сасартăках: „Керим!“—тесе
Сас пачĕ те, хитре чечек
Пулса та ларчĕ пĕрĕнсе.
Керим вăранчĕ, çапнă пек.

Каллех пытаннă лашасем!
Ни кĕçенмеççĕ, ни йĕрсем
Ӳксе юлман уй-хир çине.
Курать Керим хăй умĕнче
Çеçке çап-çутă çиçнине.
Мĕнпур çак хир таврашĕнче

Ун пек çеçке шăтни пулман.
Керим ăна чипер татсан,
Калайрĕ-ши пĕр-ик сăмах,—
Вăл пулчĕ-тăчĕ урхамах,
Тĕсрен—кăвак. Кĕмĕл çилхе
Вĕçесшĕн пек вылять çилпе.
Йĕвенсĕрех тытса ăна
Керим утланнăччĕ кăна,
Каçхи тӳлеклĕхе сирсе
Кĕçенчĕ вăл çӳçентерсе.
Вĕçсе хăпарчĕ тӳпене!
Элле çӳлти çăлтăрсене
Керим валли татса пама?..
Анчах кĕсре хăвалама
Пуçларĕ пĕлĕт хӳттине
Пытаннă вунпĕр тантăшне.
Пĕрре çӳле те аяла
Вĕçет хӳреллĕ çăлтăрла!
Ак пурте хатĕр. Вунпĕр ут!
Малтан та çавччĕ унăн шут.
(Керим утланнă-çке пĕрне,
Ыттисенчен кăшт лутрине).
Анчах Керим сисмест те пуль
Пĕр хĕр ăна юратнине,
Пĕр чун çунса ыратнине,
Юхтарнине мерчен куççуль...
(Кăшт, вулаканăм, сапăр ту!)
Мĕн-ма çапла-ши юрату?
Вăл юрататъ, а леш сисмест...
Хуть сăвăпа ăна йăпат,—
Çапах çимест-ĕçмест апат,
Çук, юрату унран писмест.
Вăл сӳннĕ шанчăкне шыратъ.
Мерчен пек çут куççуль тăкатъ...

Мĕскер пыратъ-ши шутласа

Керим утланнă çак лаша?
Вăл хĕр вĕт, хĕр! Вăл Кериме
Юратнине хăй пĕлтерме
Хăрать пулас е ĕненмест.
Анчах хăйне вăл хĕрхенмест.
Ăна Керим хăйпе чĕнсен,
Вăл, пытарса чипер сăнне,
Каймашкăн хатĕр çут тĕнчен
Хуть хăш çĕрне, хуть хăш енне.
Ели—хастарлă Кериме
Пур чĕререн савсассăн та—
Кӳлешмĕ вăрттăн хĕр çапах,
Вăл пулĕ çирĕп урхамах.
Анчах Елиçĕм мĕн тăвать?

Элле ун кунĕ-ши хура?..
Элле ӳксе вăл пуç çапать
Усал сăн-питлĕ Хĕнхура?..

* * *

Керим умне вуник кĕсре
Килсе тăратрĕ кинемей.
— Хăшне мана?—пăхса çĕре
Керим ыйтать,—е хуть хăшне-и?
Лăхлатрĕ карчăк, вăл калать:
— Хуть те хăшне пама пулать.
— Парсам çавна?—ыйтать Керим
Кăшт лутрине пит ăмсанса.
— Ăна памастăп-ха... чим, чим,—
Ват карчăк вăрçрĕ тарăхса,
— Памастăн-им? Хĕçпе сулам!—
Керим ăна юнарĕ ак.
— Ан тив, тет, карчăк, сыв юлам,
Сана эп тӳлĕп пысăк хак...
—Чыса пĕлес пулать пăртак!

Эп хак илетӗп ӗҫ туса,
Эп хакшӑн хунӑччӗ пуҫа.
А сан хаку пулать-и ҫак?
Сӳнсем тӑр кун выҫ куҫӗнчен!—
Хӗҫ тухрӗ хӑвӑрт йӗннинчен,
Ҫӑмха пек кусрӗ ҫӗр ҫине
Ылханлӑ пуҫ ӗнсе ҫинчен,
Автан пек сирпӗтрӗ юнне
Чӗтре-чӗтре вӑл мӑйӗнчен,
Керим тасатрӗ те хӗҫне
Кунта пӗтерчӗ хӑй ӗҫне...

* * *

Ҫаплах ларать-ха тӑлӑх пӳрт
Пӗр чӑх ури ҫинче пӗччен.
Вӑл ҫӑмарта пек ҫавӑнать
Унта пӗрер этем килсен.
Ҫаплах сыврать-ха тӑмана
Мӗн курнине мана-мана...
Кӑмакара сыврать кушак.
Пӳртре пӗр сасӑ ҫук—шӑпах.
Ҫаплах тулта выртать виле,
Тӳсет ҫӑмӑрсене, ҫиле...
Кунсем иртеҫҫӗ утпала.
Иртни ҫинчен кала-кала
Йӗрет хирте пӗр тӑлӑх ҫил,
Теме чӗнет вӑл: кил, тет, кил...
Иртни тек таврӑнмӗ, нихҫан!
Хӗрарӑм тутӑрне сыхсан
Тепре пулаймӑн ҫамрӑк хӗр.
Ан та йӗр, тӑлӑх ҫил, ан йӗр!
Ҫаплах иртеҫҫӗ пӗлӗтсем,
Телейсӗр ӗмӗр пек кичем.
Керим ӑҫта? Ӑна никам
Пӗлсе калаймӗ тӗрӗсне.

Вилнех пулсан вăл, уншăн кам
Тупса парайĕ хĕресне?
Анчах пĕлет уй-хир, тахçан,
Тухатмăша хĕçпе касса̀н,
Çўренĕ, тет, хирте этем.
Вут сапнă, тет, ун хĕçĕсем...
Керим çунатлă утпала
Вĕçсе, тет, каçнă тинĕсрен.
Мĕскер-ха пулнă малалла?
Тарайнă-ши вăл вилесрен?
Çĕнейнĕ-ши вăл Хĕнхура?—
Пулмарĕ нимĕн сас-хура...

## ПИЛЛĔКМĔШ ЮРĂ

Каллех умра Саркун çĕршывĕ!
Садсем те пўрт те—пурте сывă!
Анчах кунта çын пурăнмасть,
Хитре Ели те курăнмасть.
Çак самантра кĕçенчĕ ут,
Çак çурт тавра ик-виçĕ хут
Вĕçсе кĕçенчĕ те, тўрех
Пĕр-иккĕ тапрĕ çирĕпрех,
Сăртсем хыçне пытанчĕ вăл.
Элле вăл çилччĕ, те тăвăл...
Мĕнле йĕнер çинчи çынни
Ўксе юлмарĕ-ши çĕре?—
Тен çирĕп пулнă çыхăнни?
Çук, курăнмарĕ пуль сире
Геракл тусĕ—пăхаттир
Çапла сасартăк иртнĕ чух.
Атя, перацăм, çыр та çыр,
Утсем çинче эпир те шух!

Ăçта Ели? Тўпе тĕнчин
Çухалнă çăлтăрĕ ăçта?

Ун пек маттур, чипер хĕр-çын
Хăçан çуралĕ-ши тата?
Ăçта-ши вăл? Анчах Хĕнхур—
Елин усал тăшманĕ пур!
Ылхан килет, тулать ăша.
Чим, чим, герой! Мĕнле лаша
Çула пăсса хыт ĕрĕхет,
Çилрен те харсăр вĕçтерет,
Керим курать: Хĕнхур усал.
Ăна ту айĕнчи путвал
Хупса усранă виççĕр çул,
Хĕре илсе тарать иккен.
Ах, ирсĕр чун, хура çĕлен!
Керим вĕçтерчĕ шĕвĕр чул,
Çук, лекеймерĕ Хĕнхура.
Хуса çитмешкĕн кăшт кăна
Утас юлсаччĕ,—виç ура—
Хĕнхур лаши, хура лаша,
Лекесшĕн мар-ха тыткăна!
Вĕçсе çĕкленчĕ тулаша...
Пуçланчĕ вăйлă тытăçу!

Хĕçсем выляççĕ тўпере.
Пĕри—çўлте, тепри—лере...
Хĕнхур вĕçет, Ели унта
Кĕписене чăр-чар çурса
Çĕре сикмешкĕн тăрашать,
Турткаланать вăл, тарăхать.
Хĕнхур ăна пĕр аллипе
Ыталаса, тепĕринпе
Хыт тытнă сăнчăр чĕлпĕре,
Вĕçме пăхать тўрех çĕре.

Аял енчи Керим çўле,
Тўрех усал Хĕнхур çине
Туртса ак ячĕ уххине...

Хӗнхур юнланнӑ аллине
Вӗҫертрӗ хӗр пилӗкӗнчен...
Ҫак самантра пӗр сас ҫинҫен
Янрарӗ те „Керим!" тесе,
Хӑрушлӑх ҫапрӗ ман тӗсе:
Ели чӑмтарчӗ ҫӗрелле,
Аманнӑ акӑш пек ҫӳлтен.
Ҫӑлтӑр анать ҫапла ҫӗрле
Ҫӗрте пӗрер чӗре ҫӳнсен.
Анчах Керим тытать ӑна,—
Хӗнхур пӑрахнӑ ҫӑлтӑра.
Сӳнмен вӑл ҫӑлтӑр, ҫук, сӳнмен!
Тута пӗрлешрӗ те, хӗлхем
Каллех вӑй кӗртрӗ чӗрене.
Керим тӳрех Хӗнхур ҫине
Тапса сиктерчӗ лашине.
Ҫилхе ҫӗклерӗ урхамах,
Хӗнхур!—тарайман эс, хурах!

Хаяр Хӗнхур кӗмест вӑрҫа.
Утне кермен енне пӑрса
Ҫӗр ҫинелле вӗҫтерчӗ вӑл.
Хапха вашлатрӗ те ҫӑмӑл
Вӗҫет Хӗнхур сарай ӑшне.
Керим ун хыҫҫӑнах хӗҫне
Йӑтса васкарӗ ҫапӑҫма,
Анчах та пулчӗ ахалех.
Хӗнхур валли тухса тарма
Яр уҫӑлчӗ хапха каллех,
Анчах та урӑххи,—кайри.
Хӗнхур унтан тухса тарсан
Шӑлт-шалт ҫеҫ хупӑнчӗ хайхи.

Сарай пӑч тӗттӗм. Тӗттӗм каҫ.
Хӑв уруна курма пулмасть.
Ҫӑлтӑр ҫуталнӑ инҫетре,

Вӑл та пулин чӗтрет-чӗтрет.
Пӗр пӗчӗк ҫутӑ шӑтӑкран
Ҫӗре ӳкет аран-аран.
Йӗри-тавра хура стена.
Куратӑп эпӗ ик ҫынна.

Керим ҫыврать. Нӳрелнӗ ҫӗр.
Унтах ларать паллана хӗр.
Пирӗшти пек ҫунатлӑ ут
Тӑрать ик ҫамрӑк умӗнче.
Хӗнхур ҫапла тӑвать-шим суд?
Керим, тӗрмен тӗттӗмӗнче,
Ак ҫакӑн пек тӗлӗк курать:

Йӑрансӑр, анлӑ хир вырттать.
Хресчен ҫемйи ыраш вырать.
Шӑртланнӑ хӑмӑлсем ҫинче
Ача кӳми ларать. Ачи
Йӗрсе вырттать, пӳрне ӗмсе.
Хӗвел—тӳпен кӑвар пӑнчи
Ҫамка ҫинчи хура тара
Тумлаттарать ҫурла ҫине.
—Ах, шӑрӑх!—тет хресчен вара,
Пӑхать улпучӗ ҫинелле.
Кулать улпут. Мӑн хырӑмне
Усса тухать хресчен умне.
Ӗҫлес пулать сан!—тет улпут.
Унтах тӑрать ун кӳлнӗ ут.
Ларать улпут кӳме ӑшне.
Ун хыҫӗнчен тӑват вӗшле
Чупса пыраҫҫӗ иртмелле.
Таҫти мӗскӗн чун илтмелле
Шӑнкравӗ уҫҫӑн янӑрать,
Ӑна нушаллӑ ҫын тӑнлать,
Куҫ айӗпе пӑхса юлать,
Пуҫне тайса ҫӗлӗк хывать.

Хир хумханни ҫине пăхсан
Хресченĕн куҫĕ чĕтренет.

Ик ҫул юппи ҫине юпа
Лартса хытарнă ик чулпа.
„Закон“ тесе пурте курма
Ҫапса хăварнă пĕр хăма.
„Закон“ юпийĕ айĕнче
Ыйткалакан вилли ҫĕрет.
Тепри шывпа тăпра ҫисе
Вилме кĕтсе ларать черет...

Ели! Ели! Мĕн-ма куҫҫуль
Ҫутатнă сан куҫ хĕррине?
Ҫук, ман чĕре тўсменте пуль
Сан пек чипер хĕр йĕрнине!
Мĕн-ма тăмасть Керим, мĕн-ма?
Вăл мĕн ҫинчен тĕлленнине
Ели пултармĕ чухлама...

Керим, Керим! Тăрсам, тăрсам,
Анчах, тăванăмҫăм, калам:
Ăна Хĕнхур ĕмĕрлĕхе
Хупайрĕ тĕттĕм читлĕхе,
Хĕнхур ҫывратрĕ-ҫке ăна...

— Ан йĕр, Ели, кĕрсем тăна.—
Такам сас пачĕ кĕтесрен.
Эс кайнă пулăттăн тĕсрен
Илтсессĕн ҫав хитре сасса.
Ҫук, ан ҫухатăр ха ăса!
Уйăх ҫинчи хĕртен чипер,
Шап-шурă тум тумланнăскер,
Хĕр тухрĕ-тăчĕ ун умне,
Шăлса илейрĕ куҫҫульне...

Мĕнех-ха туйнă-ши Ели
Килсе тухсан хĕр-пирĕшти?
Ун питĕнче—те шик палли,
Те çын сисми чĕре хĕсни...
Вăл ăнланмасть... Куç умĕнче,
Пур хуйхăсен вăйне çĕнсе
Тĕлĕнмелле пике тăрать,
Елин вăйне парăнтарать.
Ели калать: „Ах, тура! Эс-и?..
Элле Керим хĕр эсĕ-и?..
Иртейĕ-ши ун çак ăйхи?"
А хĕр калать:—Эп—урăххи...
Керим лашиччĕ эп—хĕр-çын...

Ели

Мĕн-ма хĕр пултăн эс халь тин?

Хĕр

Çутти пĕтмест ылттăн пĕрчин—
Хуть вырттăр çул, хуть шăп пĕр пин...

Ели

Эс кӳлешместĕн-и мана?

Хĕр

Çунатлă акăш хĕвеле
Савсан та, çут хумсем ăна
Хумаççĕ пуль, Ели, çилле...

Ели

Эп пĕр пĕччен...

Хĕр

Çапах эс хĕр...
Керим вилмен-ха, нӳрĕ çĕр
Ăна илеймĕ, ан кулян.

Ели

Эс—пирёшти. Манран кулан...

Хёр

Çук, çук, Ели. Керим—хитре,
Хăюллă вăл. Ăна çĕре
Пиллес те çук-çке юрату!
Вăл виличчен (вăл—сан тусу)
Эп хам кĕретĕп çĕр айне.,.
Никам та туймĕ, ман чĕре,
Пуçа усса çӳре-çӳре
Мĕнсем çинчен шутланине...
Ăна саватăп эп, анчах
Сан чĕрӳнте—вĕри вучах...
Юрат ăна! А эп вилем.
Хам ĕмĕре ăна пиллем...

Ели

Çук, çук. Эп хам вилем, ан тив...

Хёр

Санпа мухтантăр çĕн çĕршыв!
Атя, тухар ку тĕрмерен?

Ели

Керим тăтăрччĕ вилĕмрен!

Хёр

Атя, тухар! Керимĕн пур
Телей уççи—илер ăна!

Ели

Анчах кунтах Хĕнхур, Хĕнхур!
Ун çурчĕ те кунта кăна!..

Хёр

Хĕнхур çине тавăрупа
Тăрас пулать пĕр ăрупа!

## Ели

Керимпеле танлашайма
Пулинччĕ манăн та вăй-халăм...
Çапăçăва вĕçсе кайма
Çут хĕç çĕклинччĕ манăн аллăм.

Вĕсем уçаççĕ алăка
Телей уçиллĕ алăпа.
Кĕреççĕ çĕнĕ тĕнчене,
Анчах мĕн пулчĕ вĕсене?
Çĕлен кĕтĕвĕ хуп-хура
Килсе хупларĕ пур енчен!
А Хĕр каларĕ: „Ан хăра,
Ели, çĕлен чашкăрнинчен —
Унта вĕрет тăшман çилли.
Сив юнлă пул, хастар Ели!"

Хупланчĕ сывлăш, çĕленсем
Çунатланса вĕçнипеле
Хĕвел çути кунта ӳксен
Вĕсем хуплатчĕç хĕвеле...
Хӳрисене çутăлтарса,
Авкаласа, явкаланса,
Темрен хăранă çăхансен
Явăнакан кĕтĕвĕ пек,
Пĕрре вĕсем анаç çӳлтен,
Е пăтранса, çавра çил пек,
Тепре хăпаççĕ çĕр çинчен.

Хĕр çĕленсен çулне пӳлет.
Сылтăм аллин юн тымарне
Касса ярать..
Юн сирпĕнет
Тарпа хуралнă çĕр çине.
Юхать хĕр юнĕ... юн тумлать.
Хĕр ĕмĕрне ăшăтнă юн.

Ёнтĕ хĕр сăнĕ шуралать
Сӳнме пуçлать те вăйĕ ун.
Анчах юн çăтнă çĕр çине
Шăтать хĕп-хĕрлĕ пĕр чечек.
Сарать вăл ырă шăршине
Хĕвел çинче çуралнă пек.
Ларать çап-çутă çăлтăрла
Тавралăха сăрла-сăрла.
Хура çĕлен кĕтĕвĕсем,
Сăннисене тăснăскерсем,
Пуçларĕç ырă шăршăпа
Ăшаланма, пăрçа пекех,
Вилсе хутланчĕç пĕтĕмпех!

Хĕре кĕтет мĕнле шăпа?
Çук, çук, ун юнĕ чарăнмасть...
Тумлаççĕ юн тумламĕсем...
Ак çĕленсем çинчен каçаç.
Таçта каяççĕ-çке вĕсем...
Ели калать: „Маттур ӳтне
Мĕнле хурас тен çĕр ăшне?

## Х ĕ р

Куратăн эсĕ, ав, лере
Сар кайăксем тăваç пасар,
Унта ман пултăрччĕ масар.
Парнелĕхе ак çак çĕрре
Керим илейтĕр хăй валли,
Ăна эс пар вара, Ели.
А эп вилсен ан хăра эс,
Ман вырăна ан ларт хĕрес.
Чечек шăтайĕ ман çие,
Татса пĕр пĕчĕк туратне
Эс Кериме шăрăшлаттар...
Ак манăн ирĕклĕ масар!..

Йěри-тавра çавра çерем.
Пěр çухрăм яхăн мал енче
Хěнхурăн симěс сачěсем...
Кермен тăрри сад хушшинчен
Мăнаçланса пăхса тăрать.
Ун хыçěнче пěр ту курнать.
Пит çÿллě ту—тěнче хěрри,
Унта çитмест кермен тăрри.
Ак, хир варри, кунта çерем.
Йěри-тавра пăхсан курнаç
Пит авалхи армутисем...
Ели те Хěр пěрле тăраç.

## Хěр

Ак манăн ирěклě масар!
Сыв пул, Ели! Пěрремěш хут
(Çаках пулать юлашки хут)
Пěр-пěрине, кил, чуптăвар!

Вěсем чуптурěç. Хěрлě юн
Юхса пěтет те пулě ун—
Пике шуралчě тăнăçем.
Ак, ак, хуралчěç куçěсем...
Ах, сÿнчě вăл!..
Хуллен кăна
Çěре ÿкейрě те, ăна
Çěр çăтрě... Çук вăл...
Пěр-пěччен
Ели чěнмесěр тахçанччен
Йěрес пек тăчě те, мерчен
Куççулě ÿкрě куçěнчен...
Ăна шел туйăнчě хěр-тантăш,
Ун ыра кăмăлě... Мěн-ма
Вилмен-ши вăл, пулса шур ландăш
Ěмěр-ěмěр çиçсе ларма?

Керим пӗлмерӗ-ҫке ăна,
Мӗнле вăл савăччӗ ăна!
Керимшӗн вăл ҫӗре те кӗчӗ...
Вăрах Ели хурланчӗ, йӗчӗ.
Пурах ҫав ырă чӗресем,
Анчах сахал. Нумай ҫынсем
Мунча пек пӳрт маччи ҫинче
Хăйсемшӗн тăвӗччӗҫ тӗнче.

Ели пӗччен. Хир тăлăх пек.
Ҫил кăларать пӗлӗтсене.
Кӗтмен ҫӗртен тăпра ҫине
Илемлӗн шăтрӗ шур чечек.
Ели лăпланчӗ. Ҫил вӗрет,
Армутисем ҫинче йӗрет.
Ҫил тусана ҫӗкленӗрен
Йӗрет, тем пулнăн, вӗлтӗрен...
Тухаҫ хуралнă пӗлӗтсем
Таҫти тӗнчен леш хӗрринчен...
Анчах чечек ҫеҫ пӗр-пӗччен
Хир варринче ларать ҫиҫсе.
Сасартăках теме сиссе
Саланчӗҫ пӗлӗтсем таҫта.
Ели ҫеҫкен пӗр туратне
Хуллен ҫеҫ илчӗ те татса,
Тӳрех чупса Керим патне
Памашкăн кайрӗ... А Керим
Ҫаплах ҫыврать-ха ним сисми,
Халь илтӗнеймӗ-ха Ели
Урисене ҫӗре пусни...

* * *

Ҫеҫке шăршлантă хыҫҫăнах
Керим вăранчӗ. Сыв-сывах.
Мӗнле тӗнче? Ăҫти ҫӗршыв?

Вĕсем тухаççĕ тĕрмерен...
Çилсем лăпланнă. Шăп кăна.
Армутисем те вĕлтĕрен...
Вĕçет пăван, ўпре-шăна...

Е л и.

Керим, кур, ав, сана чĕртни,
Чечек ларать мĕнле хитре!

Вĕсем пуç тайрĕç çĕрпе тан,
Пуç тайрĕç пурнăçшăн вĕсем.
Анчах каллех ак анăçра
Хуллен хуралчĕç пĕлĕтсем...
Чечек каллех çуталчĕ те
Пĕлĕтсене кĕте-кĕте
Çилпе хумханчĕ.. Çил асать,
Тусансене шăлса пухать.
Те çăмăра, те ахалех...

Ак горизонт çинче каллех
Вуник тăсланкă силуэт.
Çилпе çаралнă çĕр çине
Вуник тĕле мĕлке ўкет...
Вĕсем çĕкленчĕç тўпене!
Вуникĕ татăк пĕлĕтсем
Çывхарнăçемĕн çывхараç.
Хура курнаççĕ пур çĕрсем,
Çĕре хуплать пек тĕксĕм каç.
Татах çуталчĕ шур чечек!
Çăлтăр пек пулчĕ те, унтан
Асаматсем вылятнă пек
Çўле таптарчĕ вăл фонтан!
Пĕрхĕнчĕ шыв чечек тавра
Кўленчĕ, çĕрĕ пек, çавра.
Фонтан сикет, чечек çутти
Асаматлать шыв пĕрчине.

Чим, вулакан, такам утти
Кисрентермест-и çĕр питне?

Вуникĕ пĕлĕт аякран
Васкав килеç çывхарнăçем.
Камсем вĕсем, хăш вăрçăран,
Утсем çине утланнисем?
Çук, пĕлĕт мар иккен вĕсем!
Аллисенче хура хĕçсем,
Çиййĕсенче пăхăр тумтир,
Хура тăсланкă утсемпе
Вĕçсе килеççĕ çывăха.
Хĕнхур вăл! Вунпĕр пиччĕшпе! —
Элле вăл халь те сывă-ха?!

Пăхар, ăçта Ели, Керим?
Питре вĕсен мĕнле-ха грим?
Керим палларĕ... Вилĕме
Вăл хатĕрччĕ кĕтсе илме,
Анчах хĕçпе! Хĕçпе! Хĕçпе!
Ах, çук çке ун лащи вĕçме!
Хура куçне хаярлăх тулчĕ.
Чĕри çинче — хаярлăх вучĕ,
Арслан çилли... Вăл кĕрешме
Халь акă хатĕр çĕрĕшпе!

Ели — Юлашки хут! — тесе
Уртăнчĕ ун умне пырса,
Ăна чуптурĕ макăрса...
Лешсем çитеççĕ-çке килсе!
Керим чуптурĕ те... (куççуль
Çăтмасăрах вăл тӳсрĕ пуль!)
Чĕре — çапах чĕре, çунать...

Чим, чим! Ман куçăм мĕн курать!
Фонтанăн шывĕ, вутлă пек,

Пуçланчӗ пăслăн вӗреме.
Çиççе ларан шап-шур чечек
Ыр шăрăш сарчӗ çереме.
Керим сывларӗ те ăна,
Вăй кӗчӗ пек... Лешсем çитеç...
Туссем, халь курăр фонтана!
Шур кăпăксем унта сикеç.

Сасартăк шывăн ăшӗнчен
Ука çилхе, сăнчăр йӗвен
Хăпарчӗ те, шыва сирсе
Шап-шур лаша, шап-шур çунат
Ак тухрӗ хыттăн кӗçенсе.
Хӗçне çӗклет Керим-хăлат!
Каллех çуталчӗ-çке тӗнче —
Керим çунатлă ут çинче!

Тӗттӗм тӗнчен тӗп патшисем
Килсе хупларӗç инçетрен.
Танмар пуçланчӗ çапăçу!
Çунатлă ут, ука йӗнер
Вӗçсе çӗкленчӗ çиçӗмле!
Хӗçсем выларӗç вут-хӗмле!
Пулăшăва кама чӗнер?
Керим пӗччен. Çӳлтен пăхсан,
Курать вăл шурă пăнчă çех —
Ели-çке вăл. Керим çӳлтех.
Çунатлă ут пулсан тепре
Ели вӗçетчӗ тӳпере!
Ели те кӗрӗччӗ вăрçа!..
Вӗри куççуль — ахах шăрçа
Сывлăм пӗрчи пулать çӗрте...

Хаярлăха хӗрте-хӗрте
Çын ахлатни ӳкет çӳлтен —
Пӗри аманчӗ пулӗ тен!

Керим касать хĕçпе хĕртсе.
Пĕри ак сирпĕнчĕ çĕре,
Тепри ун хыççăн! Эп хавас!
Çĕре ӳксен хура чĕре
Тӳрех пулать хура турпас.
Хĕç çапăнса янрать хĕçпе!
Касаç ӳте, çураç çиле.
Камсем çĕкленнĕ юн ĕçме, —
Вĕсем анаç виле-виле!

Хĕçпе вакланнă уйăх та
Тăхлан татки пек тӳперен,
Элле çутта çилленĕрен,
Салхуллăн çеç тăрать пăхса.

Тӳпе çинче ак иккĕн çеç!
Хĕçсем ванаç, хĕçсем çиçеç!
„Хура шуйттан! Вилетĕн эс!
Тăпру çине лармасть хĕрес!..“
Керим сасси ӳкет çӳлтен.

Чылай вĕсем вĕççен-вĕççен
Касма тăраç пĕрне-пĕри.
Керим лашин кайри ури
Пырса ак тапрĕ Хĕнхура.
Сасартăках çак хушăра
Çут çиçĕм çиçнĕ пек кĕç-вĕç
Хĕнхур çинче çуталчĕ хĕç!
Аслатилле çапнипелен
Хĕнхурăн пуçĕ хул çинчен
Аяккалла çеç ыткăнать,
Хĕнхур çĕре чул пек чăмать.
Ели, Ели! Çак вăхăтра
Мĕн турĕ-ши хастар чĕре?
Çунтарас çук ăна вутра,
Тăшман вăрлаймĕ сар хĕре!

Вăл пачĕ вăй чун-савнине,
Эп куртăм вăл савăннине:
„Керим, Керим! Тăшман вилли
Савăнăçа тĕнче валли!“

Çĕнтерӳпе Керим ансан
Шăрçалапса, çиçсе фонтан
Мухтарĕ пек çĕнтерӳсен
Паттăрлăхне чун-чĕререн.
Ели чуптурĕ Кериме,
Васкавлăн Хĕрĕн çĕррине
Вăл пачĕ паттăр савнине.

Керим

Эп курнă хĕç çуталнине,
Эп туйнă, вăй чăмăртанса
Хĕнхур çине çĕкленнине,
Чĕре хастарлăн тăртанса
Тăшмансене силленине.
Эп туйнă ăшă юрату,
Унпа яланах эп тату.
Вăл çĕклетет алри хĕçе!
Пĕлместĕп эп ӳкĕнĕçе —
Мĕн-ма çуралнă-ши тесе
Эп хурланман. Вăл — ĕмĕт мар.
Хĕçсем çутатнă ман тĕсе,
Чĕрем те манăн — шĕл кăвар.
Ун пек чĕре юратăва
Туять, пĕлет, Ели, Ели!..

Ели

Керим, эс мĕншĕн ку сăвва
Калатăн, маншăн, ман валли?
Керим, ăна эп тивĕçсĕр...
Ман мар ку çĕрĕ... Вилнĕ хĕр
Парса хăварчĕ-çке ăна

Ӳксе вилес чухне кăна;
Сана пама хушса хăварчĕ.
Керим, пире вăл çеç хăтарчĕ,
Сан хĕр-лашу, утрав лаши!
Çук, ан кулян эс ытлашши...

Керим

Чĕрешĕн тем çитмест ман, тем..
Мĕн-ма кунта çара çерем?
Мĕн-ма фонтан таврашĕнче
Халь ешермест райри пек сад?
Ăна тума, — кала тĕнче!..
Çитет-ши манăн вăй-хăват?!

Куçа уçса пĕр хупиччен
Уй-хир çине мĕн пур енчен
Шăтса ешерчĕ симĕс улăх,
Ытарма çук хитре те тулăх!

Асаматсем сапать фонтан...
Пĕр-ик хăлаç кайсан унтан
Ларать пĕр ватă çеç йăмра,
Те тĕлĕкре, те шухăшра...

Ун кутĕнче пуканесен
Ваййин кĕтесĕ халиччен
Упраннă, уйăх пек, пĕччен...
Йăмра, пуç тайнăн фонтана,
Темсем çинчен калать ăна...
Асăнтарать тахçан-тахçан
Керим çухатнă кунсене.
Ирпе тăрсан, каçпа выртсан
Шутланă ыр шухăшсене.

Куççуль пĕрчи куçсем çине
Шăтса ларайрĕ... Ман тăван
Хурлантарать-шим чĕрине?
Е уйрăлать-шим такамран?

* *
*

Пăхаттирсем выртаç çĕрте,
Пĕр юханшыв каç та, ир те
Шыв сиккинчен ирте-ирте
Шавла-шавла юхан çĕрте
Хĕçсем выртаççĕ тутăхса,
Хĕвел çути çине пăхса.

Эй, вăхăт, эс тăхта, тăхта!
Тен ку хĕçсен çуттисене
Хăйăр та кайĕ-ха шăлса,
Пăхаттирсен шăммисене
Пытарĕ хăйăр хăй ăшне...
Иртеç çулсем, анчах миçе?
Вĕсемшĕн çук шăпа, виçе,
Хуркайăк пек вĕçе-вĕçе
Вĕсем каяççĕ пит инçе.
Хĕнхур керменĕн хыçĕнче
Ларать катмарăн çĕкленсе
Пĕр пысăк ту. Унта çăхан
Ларать виле сăха-саха.
Лаша утти те çын утти
Пĕр илтĕнсен унта çити
Вăл çухăрать мĕнпур вăйран,
Вăл йыхăрать çав Хĕнхура...
Анчах Хĕнхур халь масарта,
Кăвакарса çĕрсе выртать.
Ик çын çывхарнине курсан
Хайхи çăханĕ хăраса,
Вĕçсе çĕкленчĕ ахăрса.
Куçран çухалчĕ кашласа.
Вĕсен умне тухать пĕр алăк,
Уççи те пур — ăна уçмалăх.

Керим калать: „Уçар! Уçар!
Мĕскер пытаннă-ши? Курар"!
Ахаль йышши те мар иккен —

Ку алăк тепĕр çут тĕнчен!
Вĕр-çĕн тĕнченĕн çуттинчен
Куç шарчĕ карĕ саманта...
Тинкеререх пăхать Керим:
Савăннипеваскать чĕри.
Куçсем арпашрĕç... Вăл курать:
Унта Ели пăхса тăрать.
Унтах лаши, шап-шур, чипер,
Ука çилхе, ука йĕнер.
Симфонийĕ янрать тĕнчен
Телейлĕ кун çитни çинчен.

Ăçта пăхатăн — пурте пĕр.
Вылять, кулать каччи те хĕр...
Пурте маттур, пурте чипер!
Эс хуть хăшин чĕри çине
Чăн юрату кăварĕ пер.
Вылять Хĕвел те Çуркунне!

Ем-ешĕл улăх çеçкере!
Хăй çумĕнчи Ели-хĕре
Керим савать. Вăйă тăван
Яш каччăсем те яш хĕрсем
Пурте унпа пĕр чăн тăван:

„Вăйя-ташша, теç, килĕрсем!
Элле савмастăр-и пире?
Элле хаваслă яш чĕре
Ташлас темест-и купăспа?"
„Ташла ăста, ташла ăста!" —
Тесе шăратрĕç купăса.
Ăçта чикес-ха намăса?
Керим тухасшăн мар ташша!

„Ак тамаша, ак тамаша! —
Тесе калаççĕ хĕрĕсем, —
Юрлатпăр юрă, килĕрсем!
Элле савмастăр-и пире?

Элле хаваслă яш чĕре
Юрлас темест-и кулăспа?“
Хĕрсем юрлаççĕ пит ăста:
„Хурăн турта хуçăлчĕ,
Юман турта сыпăнчĕ.
Кив самана вырăнне
Çĕн самана пуçланчĕ“.

Керим пăхать Ели çине,
Ели пăхать Керим çине...
Хĕрсем татах та такмаклаç,
Юрла-юрла çапла калаç:
„Мĕн-ма килмесгĕр вылямa?
Элле савмастăр-и вăйя?
Элле пире хĕрçум пулма
Чĕнмешкĕн килтĕр-и туя?
Чĕнтерлĕ пĕкĕ — асамат...
Шăнкрав çакас чи хитрине!
Мĕнле-ха сирĕн хушамат? — “
Тесе пуçларĕç юррине.
„Керим эп!“ — тет хай пăхаттир.
„Ели эп!“ — тет хĕвел пики.
Мухтав сире, маттур эсир!
Ниçта та пулмĕ кун пекки!

Тавралăх — ăшă çуркунне,
Савать çĕршывĕ туй кунне.
Шăнкăртатаç валак-çăлсем
Сип-симĕс улăх варринче.
Выляççĕ хĕр çивĕчĕсем
Чĕрĕ çăлкуçĕн тĕрринче...
Туй хавасне сиссе юрлаç
Пĕр çитмĕл кайăк — пĕр суклаç.
Вĕрет эрех, кĕрлет сăра,
Мĕнпур ял-йышĕ хăнара,
Тăвать Керимĕн шеп туйне.
Мухтав телейĕн уççине!

———

2
ОТК

Цена 3 руб.

А. АФАНАСЬЕВ

КЛЮЧ СЧАСТЬЯ

СКАЗКА ПОЭМА

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ—1944

Чебоксары